Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

59 (7913) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи çурла (август) уйăхĕн 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Районта

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Президенчĕн 2011 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 68-мĕш № Указĕпе килĕшӳллĕн строительствăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» АУО-н строительство участокĕн штукатур-малярне **Тамара Васильевна НИКОЛАЕВĂНА** «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ» хисеплĕ ят панă.

Йышăну

## Камсем çĕнтерӳçĕсем пулĕç?

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ кăçалхи августăн 1-мĕшĕнче ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем, механизациленĕ тата уй-хир бригадисем хушшинчи кăçалхи вырмари конкурсне ирттересси пирки 353 № йышăнăва алă пуснă.**

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

Семинар

## Малти планра – сăн ӳкерчĕк

Республикăри район хаçачĕсен журналисчĕсем июлĕн 21-мĕшĕнче фоторепортажсем хатĕрлес ăсталăха ӳстерес тĕллевпе ятарлă семинара хутшăнчĕç. Ăна «Мегафон» компани пулăшнипе йĕркеленĕ.

Семинарта Мускаври патшалăх университечĕн журналистика факультетĕнчи фотослужба ертӳçи Дмитрий Линников хăйĕн опычĕпе паллаштарчĕ, сăн ӳкерчĕке тĕрĕс тăвассин вăрттăнлăхĕсене уçса пачĕ. Интереслĕ кадрсем, вăл шутра портрет ӳкерсе илесси пирки те, сăн ӳкерчĕк тунă чухне çутăпа, тĕкĕрпе усă курасси пирки те Линников тĕслĕхсем çине тайăнса каласа пачĕ.

Сăн ӳкерчĕк ăсти ертсе пынă семинара хутшăннисем ятарлă свидетельствăсем илме тивĕçрĕç.

**Хамăр инф.**

## Тырă турттарнă çĕрте тăрăшуллă



*Сăн ӳкерчĕкре эсир Валерий Алексеевич Данилова куратăр. 1977 çултанпа вăл «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче водительте тăрăшать. Опытлă водитель çак хĕрӳ тапхăрта хиртен тырă турттарнă çĕрте вăй хурать. Вырма ĕçĕсем пуçăннăранпа хăйне шанса панă ЗиЛ автомашинăпа 104 тонна тырă турттарма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ вăл.*

***В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

Уйăхлăх

## Лару-тăру шухăшлаттарать

Иртнĕ çул республикăра августăн 1–31-мĕшĕсенче «Трактор» уйăхлăх операци иртнĕччĕ. Ун чухне пĕтĕмпе 3196 трактора, çул-йĕр тата строительство, ытти йышши хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсене тĕрĕслеме май килнĕ. Лару-тăру йĕркеллĕ темелле мар. Тĕрĕсленĕ пĕтĕм техника хатĕрĕнчен регистраци правилисене пăхăнмасăр усă кураканнисем 49 пулнă, патшалăх техосмотрĕ витĕр тухманнисем – 119, 80 машинист трактористăн удостоверени, 184 машинăн регистраци документчĕ, 75-шĕн патшалăх регистраци знакĕ пулман, 178 техника хатĕрĕпе çул-йĕр хăрушсăрлăх требованийĕсене пăсса усă курнă.

Тупса палăртнă йĕркесĕрлĕхсем тĕлĕшпе республикăри предприятисемпе организацисен ертӳçисене 13 предписани, пĕтĕмпе 150450 тенкĕлĕх 493 административлă штраф панă, 77 техника хатĕрне ĕçлеттерме чарса патшалăх регистраци знакне вистесе илнĕ.

Çапла вара иртнĕ çул ирттернĕ «Трактор» уйăхлăх операци хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсен хуçисемпе патшалăх регистрацийĕн, техосмотр тăратассин, çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнассин ыйтăвĕсемпе çине тăрса ĕçлеме хистенĕ.

Çавна май Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти йышши техника хатĕрĕсен техника шайне тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕпе республика Шалти ĕçсен министерствин патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕ кăçал та августăн 1–31-мĕшĕсенче «Трактор» уйăхлăх операци ирттересси пирки хушу кăларнă. Уйăхлăх операци вăхăтĕнче çӳлте асăннă ыйтусемпе пĕрлех техника хатĕрĕсене техосмотр тăратнипе транспорт налукне тӳлнине те, кивелсе çитнĕ техника хатĕрĕсене регистраци учетĕнчен кăларса утилизацилессине те пысăк тимлĕх уйăрĕç.

Гостехнадзорăн хуласемпе районсенчи патшалăх аслă инспекторĕсене уйăхлăх операци итогĕсем пирки сентябрĕн 10-мĕшĕччен отчетсем тăратма хушнă.

Район уй-хирĕсенче

## Вырмара – 12 хуçалăх

Ăмăр çанталăка пăхмасăрах район уй-хирĕсенче вырма ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ. Ĕнерхи куна кĕрхи тулăпа ыраш уйĕсенче Е. Андреев яч. хис, «Восток», «Герой», Ильич яч. хис., «Оринино», «Свобода», Суворов яч. хис., «Ударник», Чкалов яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче, В.В. Бархаткинăн, А.Н. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче тырă вырнă.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики вырма ĕçĕсене 150, «Свобода» хуçалăх 120, Суворов яч, хис. хуçалăх 127 гектар çинче ирттернĕ. Районĕпе 777 гектар (5 процент) тырă вырнă.

Вăтам тухăç гектар пуçне 28,3 центнерпа танлашать. Ку кăтарту «Ударник» хуçалăхра 37,5 центнер, В.В. Бархаткин хуçалăхĕнче, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра 35 центнер, Суворов яч. хис. хуçалăхра 33,9 центнер, Чкалов яч. хис. хуçалăхра 30 центнер.

Ĕнерхи кун районĕпе (хресчен хуçалăхĕсене те шута илсен) пĕтĕмпе 24 комбайн вырмара ĕçленĕ.

Районĕпе нумай çул ӳсекен курăксене 98 процент, пĕр çул ӳсекен курăксене 43 процент çулнă, утă 135 процент, сенаж 92 процент, силос 87 процент янтăланă.

Аттестаци вĕçленчĕ

## Раççейре милиционерсем юлмарĕç

Маларах палăртнă пек августăн 1-мĕшĕ тĕлне Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин сотрудникĕсене аттестацилес ĕç вĕçленчĕ. Унта пĕтĕмĕшле Шалти ĕçсен министерствин 875 пин офицерĕ хутшăннă. Ведомствăра ĕçлеме юлнă сотрудниксем пурте полицейски званийĕсене илнĕ.

«Ертсе пыракан тытăмри должноçсене йышăнма 327 генерала аттестациленĕ, 21 кандидат тĕрлĕ сăлтава пула аттестаци витĕр тухайман», – çапла пĕлтернĕ РФ Шалти ĕçсен министрĕ Рашид Нургалиев «Россия–24» канала тӳрĕ эфирти калаçу вăхăтĕнче.

Реформа вăхăтĕнче вара пурĕ 183 пин çынна ĕçрен кăларнă. 2010-2011 çулсенче 20 пин ытла милици офицерне ĕç вырăнĕ тупса панă. Реформа пынă май 2012 çулччен полицейскисен йышĕ пĕтĕмĕшле 22 процент чухлĕ чакмалли паллă.

**Хамăр инф.**

Августри конференци умĕн

## «Вĕренӳ çинчен» саккун проектне сӳтсе явма

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен педагогсен йăлана кĕнĕ конференцийĕсем иртеççĕ: августăн 23-мĕшĕнче – республика конференцийĕ, районта вара – августăн 26-мĕшĕнче.

Раççей Федерацийĕн Вĕренӳ министерстви сĕннипе унта кăçал «Вĕренӳ çинчен» федераллă саккун проектне сӳтсе яваççĕ. Çапла вара конференцисенчи калаçу Чăваш Республикинчи вĕренӳ тытăмне çĕнетсе аталантарма право тĕлĕшпе условисем туса парасси тавра пулĕ.

Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви районсемпе хуласенче конференцисем ирттерес умĕн форумра çак ыйтăва сӳтсе явма сĕннĕ: шкулчченхи вĕренӳ усă (доступность) пулма «Вĕренӳ çинчен» çĕнĕ саккунпа патшалăх енчен мĕнле гарантисем пăхса хумалла?

Çак ыйту педагогсене кăна мар, ашшĕ-амăшне те пырса тивет. Çавăнпа та хаçат страницисенче ăна сӳтсе явма йыхравлатпăр. Форума Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин сайчĕ çинче те хутшăнма май пур.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Хушу

## Хĕле хатĕрленме вăхăт

Июлĕн 27-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А.Иванов 339-мĕш номерлĕ хушу кăларчĕ. Унта ял хуçалăх предприятийĕсенчи, хресчен(фермер) хуçалăхĕсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене тата комплексĕсене хĕле хатĕрлессине тĕрĕслес тĕлĕшпе ятарлă ĕç комиссийĕ йĕркеленине çирĕплетнĕ. Ĕç комиссине район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В.А.Калинин ертсе пырать. Çитес вăхăтра тĕрĕслев ирттермелли ятарлă графика палăртнă. Çапла вара çичĕ çынран тăракан ушкăн фермăсенчи лару-тăрупа паллашĕ.

Фермăсене хĕле хатĕрлессинче зоогигиена тĕлĕшĕнчи нормăна пăхăнни, ветеринари тата пушар хăрушсăрлăх правилисене шута илни, çавăн пекех унта вăй хуракансен ĕç условийĕсене кирлĕ пек йĕркелени малти вырăна тухать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Саламлатпăр

Хаклă та юратнă аннене, кукама, хунямана – Кармăш ялĕнче пурăнакан **Юлия Гавриловна КУЛЬКОВĂНА** 75 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Кĕрекӳ çăкăр-тăвартан нихăçан та ан таталтăр.

Саламласа сунатпăр ырлăх,
Çемьешĕн пултăр тарават,
Çитмĕл пилĕкре те сывлăх,
Çĕр çула çитме хăват.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕ, кĕрӳшĕ, ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçие, хăтана – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Юрий Кузьмич ВАНЮШКИНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Хурçă пек çирĕп сывлăх, инçет çул пек вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей сунатпăр. Яланах хаваслă та ырă, чунупа çамрăк пул, чир-чĕр мĕнне ан пĕл. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Пурнăçу тулăх килтĕр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр. Эпир санпа мухтанатпăр, сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.**



Хаклă та юратнă аккана, мăнаккана – Çатракассинче çуралса ӳснĕ, халĕ Кашмашра пурăнакан **Софья Никитична НИКИТИНА-ДМИТРИЕВĂНА** 85 çулхи юбилей ячĕпе ăшăн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: шăллĕсем, Никитинсен, Федоровсен, Тепловсен, Трофимовсен, Майоровсен çемйисем, çывăх тăванĕсем.**



Хаклă та юратнă мăнака – Йӳçкасси ялĕнче пурăнакан **Мария Васильевна ЗОТИКОВĂНА** 80 çулхи ябилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп, кун-çулу вăрăм та такăр пултăр. Яланах ырă кăмăллă, савăнăçлă пул. Эс пурри – пирĕн савăнăç. Татах та нумай савăнтарса пурăнмалла пултăр санăн.

**Саламлаканĕсем: кинĕ тата вĕсен ачисемпе мăнукĕсем.**

# Граждансен интересĕсене хӳтĕлесе

## Çур çул итогĕсем

Июль уйăхĕн вĕçĕнче Раççей Следстви комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕ хăйĕн кăçалхи пĕрремĕш çур çулхи ĕç итогĕсене пĕтĕмлетрĕ. Унта районсен территорийĕсенчи прокурорсемпе районсенчи шалти ĕçсен пайĕсен пуçлăхĕсем те хутшăнчĕç.

Пай следователĕсем çак тапхăрта тĕрлĕ преступленисем пирки пĕлтернисем тăрăх 413 тĕрĕслев ирттернĕ. Вĕсем пирки пĕтĕмпе уголовлă 87 ĕç пуçарнă, 254-шĕпе уголовлă ĕç пуçарассине пăрахăçланă, 58 пĕлтерӳ пирки материалсене право сыхлавĕн ытти органĕсене ярса панă. 70 уголовлă ĕç пирки тĕпчев ĕçĕсене вĕçлесе материалсене судсене ярса панă. Кусем вĕсем пĕтĕмпе 74 гражданин тĕрлĕрен 97 преступлени тунипе çыхăннă.

Регистрациленĕ преступленисен структури улшăннă май 2011 çулта тĕпчекен уголовлă ĕçсен категорийĕ те улшăнчĕ. Çапла вара тĕпчев ĕçĕсене вĕçленисем шутĕнче çынна вĕлернĕ тĕслĕхсем 4, вăл шутра çул çитменнисемпе çыхăннисем – 2, асăрханусăрлăха пула çын вилнисем – 1, çын сывлăхне ятарласа пысăк сиен кӳнипе асăрханусăрлăха пула çын вилнисем – 1, саккунсăр ирĕкрен хăтарнисем – 1, мăшкăлланисем – 7, должноçри полномочисемпе усă курса тунă тивĕççĕр ĕçсем – 3, взятка пани тата взятка илни – 4, граждансен конституци прависене пăсса тунă преступленисем – 19, влаç представителĕ çине ал хунисем – 7.

Юлашки вăхăтра следовательсен коррупципе çыхăннă преступленисене ытларах тĕпчеме тивет. Хĕрлĕ Чутайри выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин санитари экспертизин лабораторийĕн заведующийĕ З.Н. Стекольщикова тата асăннă станцин Элĕкри ветеринари участокĕн пуçлăхĕ Н.И. Фадеев взятка илнипе çыхăннă ĕçсене судра пăхса тухса айăплавсене палăртнă ĕнтĕ. Çавăн пекех коррупципе çыхăннă преступленисем тунăшăн Элĕк районĕнчи ялти пĕр шкул директорне, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ача сачĕн заведующине, Муркаш районĕнчи ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пулнă пĕр çынна судпа айăпланă.

Иртнĕ тапхăрта пĕчĕк ача вилнипе çыхăннă уголовлă ĕçсем те пуçарса суда ярса пама тиврĕ. Акă май уйăхĕнче кун пек уголовлă пĕр ĕçе суда ярса патăмăр. Элĕк районĕнче ашшĕн тимсĕрлĕхне пула икĕ пĕчĕк ача çунса кайрĕ. «Ядринжилкомсервис» ООО директорĕ А.В. Чернов айăпĕпе вара çурт çинчен пăр катăкĕ ӳкнипе кăкăр ачи вилчĕ.

Практика кăтартса панă тăрăх уйрăмах йывăр тата йывăр преступленисене çынсем ытларах чухне ӳсĕр пуçпа тăваççĕ. Кунсăр пуçне тата вĕсем йăлара, çемьере пулса иртеççĕ. Акă Етĕрне районĕнчи Кĕçĕн Шемертен ялĕнче Ф.А. Александров сăмакунпа «хăналаннă» хыççăн В.Д. Павловпа харкашма тытăннă. Хирĕç тăру çынна çĕçĕпе чиксе вĕлернипе вĕçленнĕ. Кун пек преступленисем йышлă пулни питех те шухăшлаттарать.

Пай следователĕсемпе милици органĕсен оперативлă ĕçченĕсем суррогат сутакансене тупса палăртасси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа кун пек тĕслĕхсене 8 тупса палăртнă. Ытларах чухне йĕрке пăсакансем хушшинче асаттесемпе асаннесем. Çапла майпа вĕсем пенсисĕр пуçне кăштах «ĕçлесе илесшĕн». Анчах та кун пек хăтланнăшăн уголовлă майпа ответ тытма тивесси пирки те манас марччĕ.

**А. ГАВРИЛОВ,**
**Раççей Следстви комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ.**

# Тăрăшуллă, коллективра хисепре



*Сутуçă ĕçĕ тавар сутасси кăна мар. Ку е вăл тавара туянма пыракан кашни çынпа калаçма пĕлни, унăн кăмăлне туйни, тавар суйласа илме пулăшни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак енсем пурте пур темелле Мăн Сĕнтĕр райповĕн Тренккăри самообслуживани магазинĕнче сутуçă кассир пулса вăй хуракан Вера Васильевна Ермолаевăн. Тавар туянакансемпе яланах вашават та кăмăллă вăл. Хастар ĕçчен коллективра та хисепре.*

*Сăн ӳкерчĕкре: В.В. Ермолаева.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# 170-е яхăн хулара ОСАГО хакланчĕ

## Эсир пĕлесшĕнччĕ

**ОСАГО хакланнă тени тĕрĕсех-и? Страховани хакĕсем мĕн чухлĕ ӳснĕши?**

**Владимир ПЕТРОВ.**
Муркаш.

***Ыйту çине «Росгосстрах» страховани компанийĕн районти страховани пайĕн пуçлăхне Валерий Иванович ВЯЗОВА хуравлама ыйтрăмăр.***

– Июлĕн 28-мĕшĕнче РФ Правительствин постановленийĕ вăя кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн ОСАГО пирки калакан саккуна улшăнусем кĕртнĕ. Расчет коэффициенчĕсем ӳсрĕç. Вĕсем чи малтанах водитель стажĕпе тата двигатель хăвачĕпе çыхăннă. Çавăнпа пĕрлех Раççейри чылай хуласемпе ялсем валли чи пысăк коэффициентсене те палăртнă.Çапла вара 170-е яхăн хулара ОСАГО ӳсрĕ. Вăл Чăваш Енре пурăнакансене те пырса тивет.

Хаксем чи пысăк – 2 хут ӳснисен шутĕнче Пермь, Челябинск, Тюмень, Сургут тата Хусан. Çамрăк водительсен укçа ытларах тӳлеме тивет. Килĕшӳ условийĕпе пысăк хăватлă мар автомашинăпа кирек кам та çӳреме пултарать пулсан та укçа ытларах кăларса хума тивĕ. ОСАГО пирки калакан саккуна 2003 çулта йышăннăранпа коэффициентсене пĕр хут – 2009 çулхи март уйăхĕнче çĕнĕрен палăртнă. ОСАГО енĕпе база тарифне пачах та улăштарман: сăмахран уйрăм çынсен çăмăл автомашинисем валли вăл 1980 тенкĕпе танлашать.

Шупашкар çыннисен хăйсем пурăнакан вырăнти коэффициент 1,3-чен 1,6-не çитрĕ, Çĕнĕ Шупашкарта 1-рен 1,1-не çити ӳсрĕ. Транспорт хуçисен территори коэффициенчĕ Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакансен кăна мар, республикăри пур районсенче те пысăкланчĕ. Унччен вăл 0,7 пулнă пулсан, халĕ – 0,8. Канаш хулипе кăна коэффициент унчченхи пекех юлчĕ. Обязательнăй страховани килĕшĕвĕн страховани тарифĕсен коэффициенчĕ, енчен те транспорт хатĕрĕпе камсем çӳреме пултарнине палăртнă пулсан, 1,7-чен 1,8-не çитрĕ.

Страховани тарифĕсен коэффициенчĕсем водитель миçе çултине тата унăн стажне кура чылай хăпарчĕç. Акă водитель 22 çулта е çак ӳсĕме çитеймен, унăн водитель стажĕ 3 çулччен пулсан коэффициент 1,8 пулать (унччен 1,7 пулнă). 22 çултан аслăраххин стажĕ 3 çул таран пулсан коэффициент – 1,7 (1,5 пулнă), стаж 3 çул ытла пулсан – 1,6 (0,1 чухлĕ пысăкрах).

«Хурçă утăн» двигатель хăвачĕ 50 лаша вăйĕнчен тытăнса 100 лаша вăйĕ таран пулсан коэффициент 0,1 чухлĕ ӳсрĕ.

Водительсене çавна та каласа хăварасшăн. Транспорт хатĕрĕпе мĕн вăхăт усă курнине кура та коэффициентсем пысăкланчĕç. 3 уйăхшăн 0,4 пулнăччĕ, халĕ – 0,5; 4 уйăхшăн 0,5 пулнă, халĕ – 0,6; 5 уйăхшăн 0,6 пулнă, халĕ – 0,65.

Шутласа пăхма йывăрах мар. Калăпăр Муркашра пурăнакан 22 çултан аслăрах ӳсĕмри «десятка» хуçишĕн, стажĕ 3 çул пулсан, 2011 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнчен тытăнса ОСАГО полисĕ 1386 тенкĕ вырăнне 1742 тенкĕ те 40 пус пулĕ.

# Налук тӳлессинчен пăрăнаймăн

## Налуксем

2011 çулхи пĕрремĕш çур çулта районти пур шайри бюджетсене 75729 пин тенкĕ тĕрлĕ тӳлев куçнă. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан ку вăл 109 процент пулать. Федераллă бюджета 3830 пин тенкĕ (53 процент), республика бюджетне 31617 пин тенкĕ (132 процент), вырăнти бюджета 40282 пин тенкĕ (105 процент) куçарса панă.

Тӳлевсен структуринче уйрăм çынсем тупăшран тӳлекен налук 41902 пин тенкĕпе (55,3 процент), организацисем пурлăхшăн тӳлекен налук 9989 пин тенкĕпе (13,2 процент), вмененнăй тупăшран илекен пĕрлехи налук 4535 пин тенкĕпе (6 процент), ӳстернĕ хакран илекен налук 3625 пин тенкĕпе (4,8 процент), çĕр налукĕ 1174 пин тенкĕпе (1,5 процент), транспорт налукĕ 1162 пин тенкĕпе (1,5 процент) танлашаççĕ.

Вырăнти бюджета укçа ытларах уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налукран пухăнать. Иртнĕ тапхăрта вăл 33665 пин тенкĕ (83,6 процент) пулнă. Çавăн пекех вмененнăй тупăшран илекен пĕрлехи налук 4535 пин тенкĕпе (11,3 процент), çĕр налукĕ 1174 пин тенкĕпе (2,9 процент) танлашнă.

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта налук тӳлевĕсем енĕпе парăм 398 пин тенкĕ чухлĕ ӳсрĕ, июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 13995 пин тенкĕпе танлашрĕ. Вăл шутра федераллă налуксем енĕпе 10223 пин тенкĕ, регионсен налукĕсем енĕпе 1155 пин тенкĕ, вырăнти налуксем енĕпе 787 пин тенкĕ, ятарлă налук режимĕн налукĕсем енĕпе 1820 пин тенкĕ.

Парăмсене шыраса илессипе саккунпа пăхнă мерăсем йышăнма тивет. Акă кăçалхи 6 уйăхра налуксемпе тӳлевсене парса татасси пирки уйрăм предпринимательсем патне 724 требовани пĕтĕмпе 17393 пин тенкĕлĕх, уйрăм çынсене 1282 требовани пĕтĕмпе 217 пин тенкĕлĕх ярса панă. Парăмсене налук тӳлекенсен счечĕсем çинчен тытса юлас тĕлĕшпе пĕтĕмпе 3249 пин тенкĕлĕх 426 инкасса поручениййĕ тăратнă. Парăмçăсен счечĕсемпе тĕрлĕ операцисем ирттерессине чарса лартма 173 йышăну пĕтĕмпе 7311 пин тенкĕлĕх ярса панă. Мировой судьясем патне 65 пин тенкĕ шыраса илесси пирки суд хушăвĕсем пама ыйтса 548 заявлени ярса панă.

Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 47-мĕш статйипе килĕшӳллĕн налуксене парăмçăсен пурлăхĕ шучĕпе шыраса илес тĕлĕшпе пĕтĕмпе 9912 пин тенкĕлĕх 139 исполнительнăй производство пуçарма тиврĕ. Суд приставĕсем 57 пин тенкĕ шыраса илессипе 353 исполнительнăй производство пуçарнă.

Налуксене вăхăтра тата йĕркеллĕ тӳлесси пурин тивĕçĕ те пулса тăрать. Çакă социаллă пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем тĕллевлĕ налуксем пулса тăраççĕ. Налуксем епле пухăннипе çынсене пенсисемпе тивĕçтересси, социаллă тата медицина пулăшăвĕ парасси тӳрремĕнех çыхăннă. Вырăнти тата республика шайĕнчи наци проекчĕсем мĕнле пурнăçланасси те чылай енчен налуксем йĕркеллĕ пырса тăнинченех килет. Парăм авăрне лексе хăвăр валли татах пысăкрах тăкаксем шырама кирлĕ мар. Парăмсене вăхăтра парса татмасан пенисене те, патшалăх пошлинине те, исполнительнăй тӳлевсене те (500 тенкĕрен кая мар) шыраса илĕç. Пĕр сăмахпа налуксене законодательствăпа пăхнă вăхăтра тӳлесе тăнине нимĕн те çитмест.

Налук органĕсен ĕçĕхĕлĕнче налук тӳлекенсемпе ĕçлесси тĕп енсенчен пĕри пулнă, ку халĕ те çаплах, малашне те çаплах пулĕ. Паянхи кун служба ытларах енпе сервис компанийĕ пулса тăрать. Граждансене хăйсен Конституци тивĕçне пурнăçлама – налуксене вăхăтра тата туллин тӳлеме пур майсемпе условисене те туса пама тăрăшаççĕ.

Çапла вара налук инспекцийĕ çĕнĕ режимпа ĕçлеме пуçăнчĕ. Халĕ налук тӳлекенсене Етĕрнере кашни ытлари кунпа кĕçнерни кун 8 сехетрен тытăнса 20 сехетчен (ытти кунсенче 8 сехетрен тытăнса 17 сехетчен) йышăнаççĕ. Кунсăр пуçне налук инспекцийĕн алăкĕсем пыракансемшĕн уйăхăн кашни иккĕмĕш тата тăваттăмĕш шăмат кунĕсенче 10 сехетрен тытăнса 15 сехетчен уçă пулĕç.

**И. ШОРОНОВА,**
**налук инспекцийĕн анализ, отчетлăх тата парăмсене майлаштарас енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ.**

## Йышăну

# Камсем çĕнтерӳçĕсем пулĕç?

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Механизаторсем хушшинчи конкурс июлĕн 29-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 16-мĕшĕччен пырать. Вырмана хутшăнакан комбайнерсен ĕçĕ-хĕлĕн итогĕсене комбайн маркине кура уйрăмшар пĕтĕмлетеççĕ. 1-мĕш ушкăн – «АКРОС» тата «Дон-1500», 2-мĕшĕ – «Вектор», «Полесье» тата «Енисей-954», 3-мĕшĕ – «Енисей-1200», 4-мĕшĕ – «Нива»-СК-5. Мала тухнисене свидетельствăпа 1-мĕш вырăншăн 300 тенкĕ, 2-мĕш вырăншăн 200 тенкĕ, 3-мĕш вырăншăн 100 тенкĕ преми параççĕ.

Конкурс итогĕсене эрнесерен çак кунсенче пĕтĕмлетме пăхнă: августăн 5-мĕшĕнче – июлĕн 29-мĕшĕнчен тытăнса августăн 4-мĕшĕччĕнхи тапхăра, августăн 12-мĕшĕнче – августăн 5 – 11-мĕшĕсенчи тапхăра, августăн 19-мĕшĕнче – августăн 12 – 18-мĕшĕсенчи тапхăра, августăн 26-мĕшĕнче – августăн 19 – 25-мĕшĕсенчи тапхăра, сентябрĕн 3-мĕшĕнче – августăн 27-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 2-мĕшĕччĕнхи тапхăра, сентябрĕн 10-мĕшĕнче – сентярĕн 3 – 9-мĕшĕсенчи тапхăра.

Сентябрĕн 10 – 16-мĕшĕсенчи тапхăр итогĕсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн сентябрĕн 17-мĕшĕнче конкурс итогĕсене пĕтĕмĕшле пĕтĕмлетеççĕ.

Призлă вырăн йышăннă механизаторсене премисене (свидетельствăсене), «Вырма–2011» эмблемăсене ĕç вырăнĕнчех пама пăхнă.

**2011 çулхи вырма итогĕсемпе мала тухнă комбайн экипажĕсем валли** 3 преми палăртнă: 1-мĕш вырăншăн – 3000 тенкĕ, 1-мĕш степеньлĕ диплом тата «2011 çулхи вырмари чи лайăх комбайн экипажĕ» хăю; 2-мĕш вырăншăн – 2500 тенкĕ тата 2-мĕш степеньлĕ диплом; 3-мĕш вырăншăн – 2000 тенкĕ тата 2-мĕш степеньлĕ диплом.

**Водительсен ĕçне 9 уйăх итогĕсемпе хакласçĕ:** 1-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ, 1-мĕш степеньлĕ диплом тата «2011 çулхи чи лайăх водитель» хăю; 2-мĕш вырăншăн – 1000 тенкĕ тата 2-мĕш степеньлĕ диплом; 3-мĕш вырăншăн – 800 тенкĕ тата 3-мĕш степеньлĕ диплом.

**Трактористсен ĕçне 9 уйăх итогĕсемпе хакласçĕ:** 1-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ, 1-мĕш степеньлĕ диплом тата «2011 çулхи чи лайăх тракторист» хăю; 2-мĕш вырăншăн – 1000 тенкĕ тата 2-мĕш степеньлĕ диплом; 3-мĕш вырăншăн – 800 тенкĕ тата 3-мĕш степеньлĕ диплом.

**Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсен вăрлăхне тасатакан звеносем хушшинче:** 1-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ (кирлĕ чухлĕ вăрлăха 2011 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен 100 проценчĕпех кондицие çитернĕ пулсан), 1-мĕш степеньлĕ диплом, «Вăрлăх тасатассипе 2011 çулхи чи лайăх звено» куçса çӳрекен вымпел; 2-мĕш вырăншăн – 1200 тенкĕ (кирлĕ чухлĕ вăрлăха 2011 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен 95 процент кондицие çитернĕ пулсан), 2-мĕш степеньлĕ диплом; 3-мĕш вырăншăн – (кирлĕ чухлĕ вăрлăха 2011 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен 90 процент кондицие çитернĕ пулсан), 3-мĕш степеньлĕ диплом.

**Уй-хир бригадисен ĕçне 9 уйăх итогĕсемпе хакласçĕ:** 1-мĕш вырăншăн – 2000 тепнкĕ, 1-мĕш степеньлĕ диплом тата «2011 çулхи чи лайăх уй-хир бригади» куçса çӳрекен вымпел; 2-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ тата 2-мĕш степеньлĕ диплом; 3-мĕш вырăншăн – 1000 тенкĕ тата 3-мĕш степеньлĕ диплом.

**Механизациленĕ бригадăсен ĕçне 9 уйăх итогĕсемпе хакласçĕ:** 1-мĕш вырăншăн – 2000 тенкĕ, 1-мĕш степеньлĕ диплом тата «2011 çулхи чи лайăх механизациленĕ бригада» куçса çӳрекен вымпел; 2-мĕш вырăншăн – 1500 тенкĕ тата 2-мĕш степеньлĕ диплом; 3-мĕш вырăншăн – 1000 тенкĕ тата 3-мĕш степеньлĕ диплом.

Конкурс итогĕсене пĕтĕмлетме комисси йĕркеленĕ. Комисси председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, райадминистрацин ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ В.А. Калинин.

# Çĕршĕн яваплăх ÿсет

Саккунпа паллаштаратпăр

***Паян кун йĕркинчи чи çивĕч ыйтусенчен пĕри вăл – çĕр ыйтăвне татса парасси, çĕрĕн хуçине палăртса ун тĕлĕшпе çав çĕр участокне саккунпа килĕшÿллĕн çирĕплетесси. Кунта çакна манмалла мар, паян ĕçлекен саккунсене тăтăшах улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем кĕрсе пыраççĕ. Кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен «Раççей Федерацийĕн уйрăм саккун акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» 169-мĕш номерлĕ Федераллă Саккун вăя кĕчĕ. Мĕнле улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем пирки пырать-ха калаçу?***

Çĕнĕ саккунра çĕр участокĕсемпе 3 çул е ытларах та тĕллевлĕ усă курмасан е вĕсемпе вырăнлă усă курас йĕркене пăссан, экологи требованийĕсене пăхăнмасан вĕсене ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсенчен туртса илес йĕркене пăхса хăварнă.

Çĕр участокне унăн хуçинчен çĕр законодательствине пăсса усă курсан, çак çулпа кайса çĕр пулăхлăхне чакарсан, экологи лару-тăрăвне начарлатсан суд йышăнăвĕпе туртса илме пултараççĕ.

Кунпа пĕрлех çĕрпе тухăçлă усă курманшăн, çĕр законодательствине пăснăшăн çĕнĕ саккунпа административлă яваплăх та ÿсрĕ. Çĕрпе усă курас йĕркене пăссан малашне граждансене 2–5 пин тенкĕлĕх, ĕçри çынсене 4–6 пин тенкĕлĕх, юридициллĕ вăйра тăракансене 80–100 пин тенкĕлĕх административлă явап тыттарма ирĕк пур.

Саккуна «ыйтман çĕр пайĕсем» («невостребованные земельные доли») çĕнĕ ăнлану кĕртнĕ. Çĕр пайне ыйтман пай тесе çакăн пек чухне шутлаççĕ:

– хапăрлăх прави пур çĕр пайĕпе (енчен те çĕр пайĕн прависене регистрацилемен пулсан) гражданин 3 çул е ытларах та усă курмасан тата ăна никама та ĕçлеме арендăна памасан;

– ял хуçалăх çĕрĕсен е çĕр пайĕсен хуçи тĕлĕшпе вырăнти ял тăрăхĕсен йышăнăвĕсенче кăтартни çуктăк, çĕр хуçи вилнĕ тата унăн прависене йышăннă тĕпкĕч пулмасан.

Çĕр пайĕсен хуçисем пĕрлехи пухура çĕр пайĕсен чиккисемпе ĕçлеме е çĕр пайĕсене пĕрлехи арендăна пама хăйсен уполномоченнăйне суйлама пултараççĕ.

Ăсаннă саккун граждансен çĕр пайĕсене кĕске вăхăтра патшалăх регистрацийĕ тума тата Чăваш Республикин территорийĕнче 411,2 пин гектар йышăнакан çĕр лаптăкĕсене йĕркелеме май парать.

Енчен те пай харпăрлăхĕн хуçисем 2012 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен çĕр участокĕсене виççе çирĕплетес йышăнăва тумасан тата хăйсен харпăрлăх правине регистрацилемесен вырăнти ял тăрăхĕн 2013 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен çак ĕçсене пурнăçлама тивет:

– çĕр пайĕсене виçисене палăртса ыйтман çĕрсен хуçисен списокне çирĕплетме пухусем ирттермелле;

– çĕр участокĕсен виçе проекчĕсене хатĕрлессине йĕркелемелле;

– пухупа пăхса тухнă çĕр участокĕсене тĕлĕшпе кадастр ĕçĕсем пурнăçлассине йĕркелемелле.

Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен «Раççей Федерацийĕн уйрăм саккун акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» 169-мĕш номерлĕ Федераллă Саккун вăя кĕни çĕр тĕлĕшпе малашне çĕр-шыва тимлĕх ытларах пуласси пирки калать.

**А. БЕЛОВ.**

***КĔСКЕ СПРАВКА. Муркаш районĕнче паянхи куна пĕтĕмпе 15118 çĕр пайĕ пурри паллă. Вĕсенчен 4 пин пайне район çыннисем харпăрлăх правипе усă курса харпăрлăха илнĕ. Ыйтман çĕр пайĕсем вара татах 11118 лаптăк.***

# Пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă

Следстви комитетĕнчен

Инкек куçа курăнса килмест теççĕ халăхра. Вăл кирек хăш вăхăтра та пулма пултарать. Хăш чухне тен асăрханулла пулни те пулăшаймĕ. Пурнăç вара пĕрре кăна, çавăнпа та ăна упрамалла. Иртнĕ тапхăра нихăçан та каялла таврайман. Чунри суран вара ĕмĕрлĕх юлать.

Мăн Сĕнтĕр – Ильинка автоçулăн пĕрремĕш çухрăмĕнче июль уйăхĕнче хăрушă инкек пулса иртрĕ, 1978 çулта çуралнă хĕрарăм пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Каçхи сакăр сехет çурăра вăл хăй ларса пыракан автобус алăкне уçнă, пĕр шутласа тăмасăр сикнĕ. Автоçул çине пуçĕпе çапăннă. Çийĕнчех ăна Муркашри тĕп больницăн хирурги уйрăмне илсе çитернĕ, пуç мими суранланни паллă пулнă. Йывăр суранланнăскерĕн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă.

Халĕ ку ĕç пирки ответлă ĕçченсем тимлеççĕ.

**В. ДОЛГОВ,**
**уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсен следователĕ.**

# Мĕнпе айăпа кĕнĕ-ши пĕчĕк хĕр ача?

Прокуратурăра

***Çак кунсенче Муркаш район сучĕнче çынлăха çухатнă пĕр арçыннăн уголовлă ĕçне тишкерчĕç, приговор вуларĕç, хальлĕхе вăл вăя кĕмен-ха. Ку ĕçĕн патшалăх айăплавçи район прокурор çумĕ, юстици советникĕ Ю.М. Семенов пулчĕ. Пÿтсĕр çын ĕçĕпе вара лăпкă чунпа паллашма май килмерĕ.***

Тин кăна кун çути курнă ача саккунпа килĕшÿллĕн тулли правалла çын шутне кĕрет. Малашне те вара çавăн пекех юлать. Ачана чи малтан ашшĕ-амăшĕ хÿтлĕхĕ, тимлĕхĕ, юратăвĕ кирлĕ. Кун-çул парнеленĕ çынсен айванлăхĕ, тискерлĕхĕ çитĕнекен ăрăва тĕрĕс-тĕкел аталанма чăрмав кÿмелле мар, ун черченкĕ чунне амантмалла мар. Пĕр татăлнă хĕлĕх вара каялла сыпăнмĕ, ĕмĕрлĕхех суранланса юлĕ. Аслисен кăра туйăмне пула ача-пăча арçынпа хĕрарăм хушшинчи харкашу сăлтавĕ ан пултăр.

Хăй телейне шыраса-ши Урал енчи арçын Йÿçкасси ял тăрăхĕнчи пĕр ялти хĕрарăм патĕнче хÿтлĕх тупнă. Тепĕр тесен ниçта та ĕçлемен, маларах тепĕр çемьерен уйрăлма ĕлкĕрнĕ, ниçта та регистрациленмен, чылай çул йĕплĕ карта леш енче пулма ĕлкĕрнĕ арçынпа çывăхланса çемье çавăрма, телей кайăкне пĕрле тытма ĕмĕтленме кирлех-ши тата? Шел пулин те кăмăл-туйăм хăш чухне виçесĕр уталлă пулма пултарать.

...Хĕрĕх çула çывхаракан эрех ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ арçын çын картĕнчен тухса пĕрле пурăнакан хĕрарăма хĕнет. Тискер кайăк туйăмĕллĕ арçын куçĕ умне çулталăк та çитмен пĕчĕк ача лекет. Чăрмав пăхакан пĕр айăпсăр куçĕ те, пулăшу ыйтса хăлаçланакан черченкĕ аллисем те, пÿрт ăш-чикне тултармалла шари çухăракан сасси те ун çиллине çемçетеймест. Çакăн пек лару-тăру ăна татах та тискерлентерет. Пĕр шелсĕр вăл пĕчĕкскерне темиçе хутчен пуçĕнчен çапать.

Кун хыççăн кун иртет, вăхăт малаллах шăвать. Суран вара ĕмĕрлĕхех юлать, мĕншĕн тесен вăл ытла та тарăн, тăтăшах вĕсен килçуртĕнче вĕççĕр-хĕрсĕр куççуль, ырату тата харкашу.

Тепĕр куна та сăнласа хăварам. Хĕрарăмпа арçын хушшинчи кулленхи хирĕçÿ, тытăçу. Çак тискер ÿкерчĕк яланах ача куçĕ умĕнче пулса иртет. Шел пулин те вăл çепĕç сăмах вырăнне чун-чĕрене çурмалла харкашу илтет. Унăн пĕчĕк чунчĕри кашни сас-чÿрене шикленет. Шурă мамăк евĕр пичĕ çумне ăшă алă сĕртĕнес вырăнне шартах сиктерекен хытă чăмăр лекет, кĕлеткене суранлатать, кăвакартать! Ку хутĕнче те ачана тĕкĕнмесĕр хăварман арçын, çÿлелле утăкка сиктерес вырăнне курайманлăхпа темиçе хутчен çĕклесе диван çине пăрахнă. Тепĕр кунхине вара каллех черетлĕ синкер, хальхинче пĕчĕкскерне çапнипе куçĕ кăвакарнă. Паллах кашни куна сăнлаймăн, мĕншĕн тесен çакă йăлăна кĕнĕ тискерлĕх.

Çапах та кунта пĕр ыйту канăçсăрлантарать. Мĕншĕн-ха хĕрарăм хăй пурнăçне, унтан та ытларах пĕчĕк ача пурнăçне çав тери пысăк хăрушлăх умне кăларса тăратнă, пĕчĕк ачана тискер кайăк туйăмĕллĕ арçын çумне «сăнчăрланă», тивĕçлĕ органсене маларах пĕлтермен хăтăлма та тăрăшман? Тем тесен те ача кун-çулĕшĕн амăшĕ ытларах яваплă. Апла пулсан та вăл арçыннăн тискер хăтланăвне каçарма тата ăна ирĕкре хăварма ыйтать. Ĕç-хĕл çакăн пек çаврăнса тухнине вара ăнланма питĕ йывăр, вăл çак хĕрарăм вăрттăнлăхĕ пулĕ. Анчах та иртнĕ пурнăçа каялла таврайман. Ку таранччен нушана чăтса ирттернишĕн Турри çутă малашлăх пиллетĕрччĕ кăна.

Çÿлерех асăннă факт тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарассине районти шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем чарни саккунлă пулман. Çак йышăнăва район прокуратури çине тăнипе тата хушма тĕрĕслев ирттернипе Йÿçкасси ял тăрăхĕнче пурăнакан арçын преступлени тунине çирĕплетнĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Культура хыпарĕ

# Ансамбль аякран çĕнтерÿпе таврăнчĕ



Июлĕн 29 – 30-мĕшĕсенче Чул хула облаçĕнчи Богородск районĕ тĕрлĕ ял-хулара пурăнакан юрă-кĕвĕ ăстисене йыхравларĕ. Кунта Пĕтĕм Раççейри фольклор фестивалĕн «Хрустальный ключ» конкурсĕ иртрĕ. Ăна халăх культурин традицийĕсене сыхласа хăварас, анлăлатас, пĕр-пĕрин ĕçĕсемпе паллашас, ырă йăлана упрас, çĕнетес йăхран-йăха куçарас, çак ĕçе çамрăксене явăçтарас тĕллевпе 2003 çултанпа ирттереççĕ. Çак кĕске тапхăрта фестиваль пин-пин ăстана пĕр шухăш-кăмăллă турĕ. Фестиваль кунĕсенче халăх пултарулăхĕн 20 ушкăнĕ кунта килнисене тĕрлĕ юрă-кĕвĕпе тыткăнларĕ.

Чăваш Ен чысне хÿтĕлеме вара пирĕн районти Культура çурчĕн «Муркаш» халăх фольклор ансамблĕ **(сăн ÿкерчĕкре)** кăна тивĕç пулчĕ. Апла пулсан çакă Муркаш тăрăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ансамблĕн ертÿçи пулса Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Жуков тăрăшать. Чул хула облаçĕнче «Муркаш» ансамблĕн пултарулăхне тивĕçлипех хакларĕç. Вĕсем пĕрремĕш хут кайрĕç пулин те 2 степеньлĕ дипломпа килчĕç, çавăн пекех аякри тăрăхран артистсем асăнмалăх хаклă парнепе таврăнчĕç, «Единая Россия» партин вырăнти организацийĕ те вĕсен пултарулăхне асăрхамасăр хăварман иккен, парне парса хавхалантарнă.

– Çул çÿрев пирĕн асăмра чылайлăха юлĕ, ытла та пысăк пĕлтерĕшлĕ пулчĕ вăл пирĕншĕн. Чул хула облаçĕнче пире çав тери чаплă кĕтсе илчĕç. Эпир унта «Авăтать-и куккукĕ?», «Кĕрекене лар-ха теççĕ» юрăсем шăрантартăмăр. Жюри хакланă тăрăх пысăк гала-концерта тухма тивĕçрĕмĕр. Таксмаксем вара куракансене тата жюри членĕсене питех те килĕшрĕç. Вĕсем те пирĕнпе пĕрле кĕвĕлеме хăтланчĕç. Пирĕн чăваш наци тумĕ ытла та илĕртÿллĕ-çке, хăшĕ-пĕри вара эрешсене тытса пăхрĕ, асăнмалăх сăн ÿкерĕнекенсем те чылайăн пулчĕç, – терĕ Юрий Нестерович инçетри çул çÿревре пулнă хыççăнхи савăнăçа пытараймасăр.

Халăха савăк кăмăл парнелекен «Муркаш» ансамбле 1994 çулта йĕркеленĕ. Унта хутшăнакансем тăтăшах тĕрлĕ çул çÿреве тухаççĕ, халăха хăйсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ. Ансамбль район, республика тата ытти шайри конкурссене хутшăнса малти вырăнсене тивĕçет. 2005 çулта вара вăл халăх коллективĕн ятне тивĕçрĕ. Кăçалтанпа 20 çынран тăракан ушкăна Ю. Жуков ертсе пырать.

– Çак ушкăна çÿрекенсене пурне те тав сăмахĕ калас килет. Ăста артистсене кашнине ятран асăнам: В.Авдеева, Л.Александрова, Т.Васильева, Л.Верховцева, З.Кириллова, Е.Костина, Ю.Кузьмина, Л.Мироваева, Н.Сазонова, З.Семенова, Э.Федотова, В.Белов, В.Григорьев, Р.Кириллов, И.Майков, В.Михайлов, Ф.Григорьева, Е.Аксендарова. Вĕсем килти ĕçĕсене пăхмасăрах пухăнаççĕ, тĕрлĕ ял-хулана тухма та вăхăт тупаççĕ. Сывлăхĕсем пулччăр вĕсен, юрлас-ташлас кăмăлĕсем нихăçан та ан иксĕлччĕр. Юрă-кĕвĕне ăнланакан, тăван ен культури енне туртăнакан тата ăна упрама та хĕмлентерме тăрăшакан çын хăйĕн малашлăхри вырăнне тупĕ, – терĕ ăста ертÿçĕ ансамбле хутшăнакансене тав тунă май.

Малашне те эпир вĕсене çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнÿсем тума сунар, ăна валли вара вĕсен яланах çирĕп сывлăх та юрлас-ташлас туйăм хĕмленсе тăтăр.

Аякри çул çÿреве кайса килме «Муркаш» ансамбле хутшăнакансене Муркашри чăх-чĕп фабрики (ертÿçи Н.Г.Ванеркин), «Свобода» хуçалăх (ертÿçи В.К.Ананьев), «Ва-Сем» (ертÿçи В.С. Кондратьев) укçа-тенкĕ парса пулăшрĕç, çĕнтерÿпе таврăнма ăнăçу сунчĕç.

**Р. МАКАРОВА.**

Аукцион

## Администрация Моргаушского района Чувашской Республики извещает о проведении открытого аукциона

**Форма торгов** – открытый аукцион.

**Наименование аукциона** – открытый аукцион на право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2011 году.

**Основание проведения аукциона** – постановление Администрации Моргаушского района Чувашской Республики № 755 от 29.07.2011 года «Об условиях приватизации муниципального имущества Моргаушского района»

**Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

**Контактные лица**: Петров А.В., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66, Уткин Э.Г., ведущий специалист-эксперт отдела, тел.: 62-5-99

**Предмет аукциона**: право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2011 году.

**Начальная (стартовая аукционная) цена**: начальная (стартовая аукционная) цена муниципального имущества определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

**Перечень муниципального имущества Моргаушского района подлежащего приватизации в 2011 году:** Лот №1: Помещение №3, расположенное на первом этаже нежилого одноэтажного кирпичного здания (Лит.А), находящееся по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, ул. Центральная, дом 28, Литер: А; общая площадь помещения – 71,3 кв.м.; 1987 года постройки, инвентарный номер БТИ-2991.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 60000 (Шестьдесят тысяч) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Сроки предоставления заявок: с 03 августа 2011 года по 02 сентября 2011 года.**

Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123000012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа: задаток на участие в аукционе по продаже объекта муниципального имущества 12.05.2011.

Для участия в аукционе претенденты представляют следующие документы:

заявку; платежный документ с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение соответствующих денежных средств. Физические лица предъявляют документ, удостоверяющий личность. Юридические лица дополнительно представляют следующие документы: нотариально заверенные копии учредительных документов; решение в письменной форме соответствующего органа управления о приобретении имущества (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент); сведения о доле Российской Федерации, субъекта Российской Федерации, муниципального образования в уставном капитале юридического лица; опись представленных документов. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется надлежащим образом оформленная доверенность.

Определение участников аукциона состоится 06 сентября 2011 года по месту нахождения организатора конкурса: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж. Время проведения открытого аукциона 07 сентября 2011 г. (по московскому времени): Лот №1- 10.00.

По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи муниципального имущества. Договор купли-продажи муниципального имущества заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола. Победителем аукциона признается лицо, предложившее наибольшую цену.

Ыйту – хурав

# Çĕр лаптăкне кам тивĕçет?

**«Пирĕн çемьере виçĕ ача. Аслисем 18 тултарайманха, кĕçĕнни виçĕ çултан иртрĕ çеç. Пирĕн тӳлевсĕр çĕр лаптăкĕ илме май пур-и?»**

**Редакцие шăнкăравланинчен.**

***Ку ыйтăва хуравлама район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнĕвĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.В. ПЕТРОВ килĕшрĕ:***

– Чăваш Республикин Президенчĕ М. Игнатьев кăçалхи мартăн 4-мĕшĕнче «Чăваш Республикинчи нумай ачаллă çемьесене пулăшу памалли хушма мерăсем çинчен» Указа алă пусрĕ. Ун хыççăн республикăн Патшалăх Канашĕ «Чăваш Республикинчи нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсем уйăрса парасси çинчен» саккун йышăнчĕ.

Саккунра тӳлевсĕр çĕр лаптăкне камсем тивĕçнине те, хăш çемье нумай ачаллă шутланнине те çирĕплетнĕ. Çапла вара унпа килĕшӳллĕн пурăнмалли çурт-йĕр тума уйăрса паракан çĕр лаптăкне кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çемьере виççĕмĕш е ун хыççăнхи ача çуралнă (усрама илнĕ) пулсан памалла. Ку вăхăтченхи çулсенче çемьере виççĕмĕш е ун хыççăнхи ача çуралнă (усрама илнĕ) пулсан, çемье вырăнти хăй тытăмлăх органĕнче пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă пулсан çеç тивĕçет. Асăннă категорисене кĕрекен çемьесен вырăнти хăй тытăмлăх органне çĕр лаптăкĕ уйăрса пама ыйтса заявлени çырмалла.

Сăмахран, çемьере çул çитмен (18 тултарман) ача виççĕ, виççĕшĕ те 2011 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен çуралнă, çемье пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăман. Апла пулсассăн çак çемье дача валли е хушма хуçалăх йĕркелеме кăна çĕр лаптăкĕ пама ыйтса заявлени çырма пултарать. Ыйту паракан çемйи маларах вырăнти хăй тытăмлăх органне пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă пулсан вăл пурăнмалли çурт-йĕр туса лартмалли çĕр лаптăкне тивĕçет.

Аса илтерсе хăваратăп, «Чăваш Республикинчи нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсем уйăрса парасси çинчен» саккунра палăртнă тăрăх çемьере виçĕ е ытларах ача (усрава илнисем пулсан та) пурте 18 тултарман, Раççей Федерацийĕн гражданĕсем пулсан тата Чăваш Республикинче пурăнаççĕ пулсан çеç çемье нумай ачаллă шутланать.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**хатĕрленĕ.**

# «Мечта» – асамлă тĕнче

Çуллахи кунсем – ачасемшĕн чи лайăх та ырă вăхăт. Хĕвелĕ пăхать, таврана чечек шăрши сарăлать, çемçе курăк çинче çара уран чупма аван... Çулла урамра вылякан вăйăсем ачасемшĕн татах та интереслĕрех туйăнаççĕ.

Çуллахи кунсем ачасемшĕн асăнмалăх пултăр тесе Мăн Сĕнтĕрти «Мечта» ача садĕнче ĕçлекенсем питĕ нумай тăрăшрĕç.

Ача сачĕн картишне кĕрсенех хăвна асамлă тĕнчене лекнĕн туятăн. Кунта чечек питĕ нумай – чĕррисем те, чĕрĕ маррисем те. Тепĕр тесен чĕрĕ маррисем интереслĕрех те. Вĕсене кунти ĕçченсем напиток кĕленчисенчен ăсталанă: тюльпансем, салтак тӳми, нарциссем...

Кунтах Яга кинемейĕн çурчĕ те. Çурт умĕнче ачасем чылайччен выляма юратаççĕ. Ывăнсан вара илемлĕ саксем тата капăрлатнă пĕренесем çине ларса канаççĕ.

Малалла утса пынă май пĕчĕк кӳлĕ умĕнче ларакан акăшсене курма пулать. Автомашина кустăрмисенчен хатĕрленĕскерсем хăйсене чăн-чăн кӳлĕ умĕнче туяççĕ: питĕ мăнаçлă вĕсем. Ача сачĕн картишне вăрман хуралçисем сыхлаççĕ. Хурăн вуллинчен ăсталанăскесем никамран та хăрамаççĕ.

Садик тепĕр енче вара – зоопарк. Тигр, жираф тата зебра пурăнаççĕ кунта. Инçетрех мар сысна çемйине те курма пулать. Ачасем вĕсене чĕрĕ чунсене ачашланă пекех ачашлаççĕ.

Тĕлĕнмелле çынсем ĕçлеççĕ садикре. Пушă вăхăта нихăçан та сая ямаççĕ, мĕн те пулин ăсталаççĕ, çĕнĕ япаласем шухăшласа кăлараççĕ. Ача сачĕн ертӳçи Галина Александровна Шолкова та коллектива хавхалантарсах пырать.

Килсе курăр пирĕн пата!

**Л. АЛАТОВА,**
**воспитатель.**

Шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче







## Пĕлтерӳсем. Объявления

**5 августа с 8-00 до 16-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Белорусской фабрик и других российских производителей.**






**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

**Сделай подарок себе и своим близким – закажи ювелирные изделия.**
**ЮВЕЛИРНАЯ МАСТЕРСКАЯ**
- **изготовление ювелирных изделий, скидки;**
- **лазерная гравировка;**
- **скупка драгоценного металла.**

**Адрес: Дом быта, рабочий день: понедельник – пятница с 9-00 до 17-00 час. Тел.: 8-927-66-88-501. 2-2.**


Магазин-салон
ГАЗОВЫЕ ТЕХНОЛОГИИ
п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13
тел. 8-987-668-04-83
реклама
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ, КОЛОНКИ GAZLUX,WOLF,
ПЛИТЫ (газ-контроль)
Разработано совместно ОАО "ГАЗПРОМ-РЕГИОНГАЗ" и ОАО НИИ "ГИПРОНИИГАЗ" специально для Российских условий эксплуатации
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ: SIBERIA, ОЧАГ
Выполняем: проекты газификации, квалифицированный монтаж
Доставка и установка плиты - БЕСПЛАТНО, рассрочка оплаты
г. Чебоксары, Сев. ярмарка,тп №10
тел. 8-951-998-90-77


**Продается новый газифицированный кирпичный дом с надворными постройками в с. Юськасы Моргаушского р-на. Рядом школа, детский сад, офис врача семейной практики, аптека, магазины, асфальтированная дорога. Документы для регпалаты готовы. Тел.: 8-902-660-53-57, 8-902-660-38-70, 8-902-288-72-24.**

**Осталось 11 путевок в детский лагерь «Ильинский» на 4 смену с 9 по 29 августа. Обращаться в отдел образования. Тел.: 62-0-92.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070301:126, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:070301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5042 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:080201:99, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:080201, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2000 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:080901:1267, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:080901, для ведения прудового хозяйства, площадью 15835 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Продаю фрезерные агрегаты для обработки почвы, агрегатируемые с тракторами МТЗ-80/82, Т-40, Т-30, Т-25, культиватор навесной, агрегатируемый с тракторами МТЗ-80/82. Цена договорная.**
**Тел.: 8-906-132-34-20.**

* * *

**МУП ЖКХ «Моргаушское» примет на работу столяра-плотника и газооператоров. Оплата достойная. Тел.: 62-3-74, 62-3-98.**

* * *

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.**

* * *

**Пӳрт тăррине тума платниксем шыратăп. Тел.: 8-961-338-27-23.**

* * *


для пайщиков
СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ
ВЫДАЕТ ЗАЙМЫ
• на любые неотложные нужды
• на покупку и строительство жилья под материнский капитал
ВНИМАНИЕ! ЛЬГОТНЫЙ ЗАЙМ “СКОРО В ШКОЛУ”
ПРИНИМАЕТ СБЕРЕЖЕНИЯ
• пенсионерам льготные % ставки
ДО 31.08.2011 г. ДЕЙСТВУЕТ АКЦИЯ С ПОВЫШЕННЫМИ % СТАВКАМИ
Кредитный потребительский кооператив “Содружество” отделение №3, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23
тел. 62-8-86, 8-919-673-42-19
www.kpksodrugestvo.ru


**Продаем комбикорма. Доставка. Тел.: 8-927-992-05-19. 4-5.**

* * *

**Продаю железобетонные кольца разного диаметра. Доставка. Услуги бормашины-траншеекопателя под водогазопровод, канализацию. Тел.: 8-927-845-58-93, 8-927-860-90-70. 1-5.**

* * *

**Требуется водитель на автомашину КамАЗ-самосвал.**
**Тел.: 8-927-858-88-66. 2-2.**


КАЧЕСТВЕННЫЕ
ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНАИ ДВЕРИ
ЗАМЕР И ДОСТАВКА БЕСПЛАТНО
КРЕДИТ
НА ВСЕ ПОВОРОТНО-ОТКИДНЫЕ ОКНА МОСКИТКИ В ПОДАРОК
с.Моргауши магазин GALACTICA (напротив Сбербанка)
ТЕЛ: 62-3-79
8-961-346-39-64


**Çурт тумалли 24 сот. çĕр сутатпăр. Муркаш районĕ, Ивановка ялĕ, çĕнĕ урам. Çутă, газ пур.**
**Тел.: 8-906-382-22-98.**

* * *

**ООО «Металлком» закупает лом черных и цветных металлов по высоким ценам. Тел.: 8-903-389-29-93. 2-2.**

* * *

**5 августа с 9-00 час. в Моргаушской школе проводится распродажа школьной одежды производства фабрики «Рассвет».**

Орининти вăтам шкул коллективĕ çак шкулта повар пулса ĕçлекен М.И. Сальниковăн юратнă

**МĂШĂРĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Прогноз погоды

| | среда 3 августа | | | | четверг 4 августа | | | | пятница 5 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +11 | +16 | +19 | +14 | +11 | +18 | +21 | +16 | +15 | +15 | +15 | +13 |
| Давление мм | 745 | 747 | 747 | 748 | 747 | 747 | 745 | 744 | 742 | 741 | 739 | 738 |
| Влажность % | 75 | 55 | 42 | 55 | 70 | 50 | 41 | 56 | 59 | 74 | 87 | 82 |
| Ветер | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | В | В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В |
| м/с | 3 | 5 | 6 | 3 | 3 | 5 | 5 | 2 | 4 | 4 | 6 | 5 |
| Солнце восход/заход | | 05:00 | 20:57 | | | 05:02 | 20:55 | | | 05:04 | 20:53 | |
| Луна восход/заход | | 10:15 | 21:35 | | | 11:43 | 21:52 | | | 13:11 | 22:13 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учреждениĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 02.08.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4343.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.